Иванов К.В. Çулталăк хушши; Чĕкеç: [сăвăсем] / К.В. Иванов // Хатĕр пул. – 1940. – № 6. – С. 18.



**Сĕнтĕрвăрринчи ачасен техникăллă станцинчи çамрăк трактористкăсен кружокĕн членĕсене Юрий Плотников трактор чаçĕсемпе паллаштарать.**
(*Бабаев фото-ӳкерчĕке*)

## СУЯ ХУТАÇÇИ

(Ю М А Х)

Ĕлĕк авал пĕр ялта Суйкка ятлă çын пурăннă. Вăл çав тери суйма ăста пулнă. Çавăнпа та ăна çынсем „Суйкка—суя хутаççи" тесе чĕннĕ. Суйкка хăйĕн хĕлне-çуне яланах пуян арманĕнче ирттернĕ. Вăл унта мельник пулса ĕçленĕ.

Пĕрре çапла пĕтĕм ял халăхĕ шыв хĕррине пĕве пĕвелеме пухăннă пулнă. Çынсем хавхаланса хĕрсе ĕçленĕ вăхăтра Суйкка кĕпер урлă каçса пынă. Унăн пысăк çăпати çат-çат тунине илтсен, çынсем çаврăнса пăхнă та:

— Астăвăр-ха, суя хутаççи пырать ав!—тесе кăшкăрнă.

— Суйкка—суя хутаççи! Кил-ха, суйса хăвар-ха мĕн те пулин,—тенĕ вĕсем.

— Каккуй суйса тăма халь!—тенĕ Суйкка çынсем еннелле аллинчи хутаççине сулса.—Ав, Шеле çырмине такам тăвар тăкса хăварнă, çавăнта васкатăп.

„Тăвар" тесен çынсем пурте ĕçĕсене пăрахса Шеле çырмине чупнă, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра пурин те тăвар пĕтсе çитнĕ пулнă.

Халăх хăй хыççăн çитсе, тĕпĕртетсе иртсе кайсанах, Суйкка çул хĕррине ларнă та чĕлĕм чĕртсе янă. Çынсем Шеле çырмине чупса çитнĕ. Пăхаççĕ нимĕнле тăвар та çук.

— Татах суйса хăварчĕ, шуйттан Суя хутаççи!—тенĕ вĕсем тарăхса.

А. Кăлкин.

# К. В. ИВАНОВ САВВИСЕМ

☆ ☆ ☆

## ÇУЛТАЛĂК ХУШШИ

Шурă юр ирĕлет,
Çеçен хир чĕрĕлет,
Ешел курăк ӳсет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
Ăшă çил вĕркелет,
Сар ыраш çитĕнет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хир илемĕ каять,
Сĕм вăрман çаралать,
Пĕрмай çăмăр çăвать...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хирсенче юр анчах,
Çырмара пăр анчах,
Сивĕтет аванах...
Вăл хăçан пулать-ши?

## ЧĔКЕÇ

Чĕкеç, чĕкеç—чĕкеçĕ,
Пĕртте канма пелмерĕ:
Кунĕпе вĕççе çӳрерĕ,
Улăм пĕрчи пуçтарчĕ,
Тăмпа шăлса çыпăçтарчĕ.
Хăйне йăва çавăрчĕ.
Хăйне йăва çавăрчĕ,
Çăмарта тума тытăнчĕ:
Çăмартасем турĕ те,
Йăви çинчен анмасть те—
Чĕп тухасса кĕтет вăл.
Акă, чĕпĕ кăларчĕ:
Чепписем чăйлатаççĕ,
Çиме апат ыйтаççĕ,
Чĕкеç, чĕкеç—чĕкеçĕ,
Кунĕпе вĕççе çӳрет вăл,
Пĕртте канма пĕлмест вăл:
Шăна-пăван пуçтарать,
Чĕпписене тăрантать.

## ПАТТĂР ПЕТРУÇ

*В. ВЕНГЕР*

Польшăн ирсĕр панĕсем
Пĕр ĕшнене пытаннă.
Пирĕн Хĕрлĕ Çар çине
Тапăнмашкăн шутланă.

Çамрăк Петруç вăрманта
Курчĕ вĕсен йăвине.
Чупрĕ çакна пĕлтерме
Хĕрлĕ боецсем патне.

Паттăр Хĕрлĕ боецсем
Илтрĕç Петруç хыпарне.
Вĕсем карĕç аркатма
Пансен „ăшă" йăвине.

Лартрĕç паттăр Петруçа
Çамрăк çӳрен ут çине,
Ыр кăмăлпа юратса
Чĕлпĕр пачĕç аллине.

Çитрĕç Хĕрлĕ боецсем
Хура вăрманваррине.
Тĕппех çĕмĕрчĕç вĕсем
Пансен „ăшă" йăвине.
1939 ç.



**Сĕнтĕрвăрринчи ачасен техникăллă станцинче. Коля Гурьев трактора лайăх вĕренсе çитрĕ. Унпа хăй тĕллĕн çӳреме пултарать.**
(*Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ*).